26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944 МАРТ 11 ШĂМАТКУН 50(6545) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронтăн çарĕсем, çĕнĕрен наступлени туса тытăнса, нимĕçсен УМАНЬ енчи вăйлă оборонине татнă та пилĕк кун хушши наступленилĕ çапăçусем туса пырса, 40—70 километр малалла куçнă, шăтарса илнĕ вырăна фронт тăрăх 175 километра çити сарнă.

Çав операцие туса, фронт çарĕсем УМАНЬ хулине, ХРИСТИНОВКА хулипе вакка чугун çул узелне, Киев облаçĕнчи ТАЛЬНОЕ, БУКИ, МАНЬКОВКА, БАБАНКА, ЕКАТЕРИНОПОЛЬ ятлă район центрĕсене, Винница облаçĕнчи МОНАСТЫРИЩЕ ятлă район центрне тата халăх пурăнакан ытти 300 ытла пункта туртса илнĕ.

Наступлени туса пырса, пирĕн çарсем нимĕçсен ултă танковăй дивизине, çичĕ пехотнăй дивизине тата пĕр артиллери дивизине йывăр поражени тӳстернĕ, çавăн чухне нимĕçсен танкĕсене тата хăй тĕллĕн куçса çӳрекен орудийĕсене 500 ытла тытса илнĕ, вĕсенчен 200-шĕ ытла—пĕтĕмĕшпех юсавлă «тигрсем», «пантерăсем» тата «фердинандсем», кунсăр пуçне тĕрлĕ калибрлă хĕç-тупписем 600 ытла, автомашинăсем 12.000 ытла тытса илнĕ.

Çапăçусенче танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БОГДАНОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КРАВЧЕНКĂН, бронетанковăй çарсен маршалĕн РОТМИСТРОВĂН танкисчĕсем, ТРОФИМЕНКО генерал-лейтенантăн, КОРОТЕЕВ генерал-лейтенантăн, ЖМАЧЕНКО генерал-лейтенантăн, ГАЛАНИН генерал-лейтенантăн çарĕсем, артиллери генерал-лейтенанчĕн ФОМИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ФАУСТОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ГУСАРОВĂН артиллеристчĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн ГОРЮНОВĂН летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве асăннăçах палăртса хăварас шутпа çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе частьсене «УМАНЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 10-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МОСКВА, нимĕçсен УМАНЬ енчи оборонине татнă Украинари 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, [illegible] Тăван çĕршыв ячĕпе [illegible] салют парать.

Пиччĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, нимĕçсен оборонине татса кĕнĕскерсене тата вĕсен Умань—Христиновка патĕнчи группировкине çапса аркатнăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕнпе пăхăнмарлăхĕшĕн çапăçура пуçне хунă паттăрсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1944 çулхи мартăн 10-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 9-мĕшĕнче УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступлени вăйлатса пырса, тăшмана çавăрса илмелли маневр тунипе пĕрле фронтран атакăласа, СТАРОКОНСТАНТИНОВ хулипе чугун çул узелне — нимĕçсен ПРОСКУРОВ енчи оборонин тĕревлĕ пахалăхне пунктне — туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — МШАНЕЦ, ОБАЖАНЬЦЕ, ИВАЧУВ, ДЫЧКУВ, РОМАНУВКА, ХОДАЧКУВ, МАЛЫ, ХМЕЛИСКА, КАМИОНКА, МОЛЧАНОВКА, КЛИНИНЫ, ПАХУТИНЦЫ, НИКОЛАЕВ, ЧЕРНЕЛЕВКА, ЛАГОДИНЦЫ, ВЕРХНЯКИ, МАТРУНКИ, ИГНАТОВЦЫ, ТЕРЕШЕВЦЫ, МЫТКОВЦЫ, ШРУБКОВ, НОВАЯ СИНЯВКА, БЕРЕЗНА ялĕсем тата ИВАШКОВЦЕ, КУРНИКИ, ШЛЯХЧИНЦЕ, БОРКИ ВЕЛИКИЕ, СТРИЕВКА, МАКСИМОВКА, БОГДАНОВКА, РОСОХОВАЦЕЦ, АНТОНИНЫ чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ТАРНОПОЛЬ хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та тăшманпа хула урамĕсенче çапăçма пуçланă.

КАЗАТИН хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, наступлени пуçласа ярса, Винница облаçĕнчи УЛАНОВ район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ПУСТОВОЙТЫ, ЛУЗНА, КУСТОВЦЫ, РОГИНЦЫ, АНТОПОЛЬ, СТАРЫЙ ПИКОВ, ЛЮЛИНЦЫ, НАПАДОВКА, РАДОВКА, ЗАЛИВАНЩИНА, ЧЕРЕПАШИНЦЫ ятлă пысăк ялсем тата КРЫЖАНОВКА ятлă чугун çул станцийĕ.

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуçласа ярса, ИНГУЛЕЦ шывĕ урлă каçнă та нимĕçсен çав шывăн хĕвеланăç енчи çирĕп оборонине татнă, тăватă кун хушши тăшманпа çапăçса 30 километртан пуçласа 60 километр таран малалла куçнă, татса кĕнĕ вырăна фронт сарлакăшĕпе 170 километра çити аслăлатнă.

Çав наступленире пирĕн çарсем нимĕçсен виçĕ танковăй тата ултă пехотнăй дивизине йывăр çухатусем кӳнĕ, Николаев облаçĕнчи НОВЫЙ БУГ тата КАЗАНКА район центрĕсене туртса илнĕ, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ТЕРНОВАТКА, ЛОЗОВАТКА, АНАСТАСЬЕВКА, МИХАЙЛОВКА, НОВАЯ ВЛАДИМИРОВКА, НОВОЛАЗАРЕВКА, АВДОТЬЕВКА, КРАСНОВКА, НИКОЛЬСКОЕ, ОРЛОВО, ТРОИЦКО-САФОНОВО, ДРЕНДЕЛЕВО, СКОБЕЛЕВО, АФАНАСЬЕВКА, НОВОКОНСТАНТИНОВКА, ЕФРЕМОВКА, НОВО-ПОЛТАВКА ятлă пысăк ялсем тата НОВЫЙ БУГ, ГОРОЖАНЫ, МОИСЕЕВКА, РАХМАНОВКА, ЛАТОВКА ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ДОЛИНСКАЯ — НИКОЛАЕВ чугун çулне татнă.

Малтанлăха илнĕ даннăйсем тăрăх, тăватă кун хушши пынă çапăçусенче УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—67, тупăсем — 175, пулеметсем — 270, автомашинăсем — 2.000 ытла, бронетранспортерсем — 14, тĕрлĕрен çар пурлăх склачĕсем—10. Тăшманăн вилнисене кăна шутласан та, 8000 çынна яхăн пĕтнĕ. Пирĕн çарсем пĕр пин нимĕç салтакĕпе офицерне çити тытнă илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата чылай пунктсенче теллĕн-теллĕн çапăçнă.

Мартăн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 87 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 56 самолетне пĕтерсе тăкнă.

АМАРТУ САРĂЛСАХ ПЫРАТЬ

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводăн коллективĕ ĕç тухăçлăхне уйăхран уйăхах ӳстерсе пырать. Завод февраль уйăхĕнче уйрăм продукци туса кăларма панă задание срокчен пурнăçларĕ.

Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа панă приказне сӳтсе-явнă хыççăн рабочисемпе работницăсем çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Орден илнĕ Мищенко, Дмитренко юлташсем кашни сменăрах пĕччен 4-шар норма тултарма пулчĕç. Смена мастерĕ Чиркова юлташ хăйĕн сменинче задание икĕ хут ирттерсе тултарма пулчĕ.

Заводра 30 комсомолецпа çамрăкăн фронтовой бригадисем фронтри пек хастарлăн ĕçлеççĕ. Пур бригадăсем те ĕç нормине икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Донбасс заказĕсене пурнăçлакан цехсем те хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

(Хамăр инфор.).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. С. Зверев юлташа Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарĕ тăвасси çинчен

Анатолий Степанович Зверев юлташа Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарĕ тăвас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1944 çулхи мартăн 10-мĕшĕ.

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕ

РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджечĕ çинчен тунă доклад тăрăх тухса каланисем

З. А. Андреева депутат сăмахĕ (Чăваш АССР-ĕ)

Депутат юлташсем! Эпир кунта государствăн питех те кирлĕ ыйтăвĕсене сӳтсе-явма Отечественнăй аслă вăрçăн татăклă кунĕсенче пухăнтăмăр. РСФСР Верховный Совечĕ пăхса тухса çирĕплетме тăратнă РСФСР-ăн государство бюджетне пирĕн Тăван çĕршывăн интересĕсемпе килĕштерсе тунă. Вăл пирĕн Россия республикин халăх хуçалăхне малалла аталантарса ыйма май парать.

РСФСР-ăн 1944 çулхи бюджетĕнчи доходсен статйисем республикăн экономика хăвачĕ ӳссе çирĕпленсе пыни çинчен калаççĕ. Государство бюджечĕн проектĕнче пирĕн федерациллĕ республикăри мĕнпур халăхсем нимĕç ирсĕрĕсене татăклăн та пĕтĕмĕшпех çĕнтерес сехете çывхартас шухăш-кăмăлпа пурăнни палăрса тăрать. Гитлеровецсем вăрçă пынă вăхăтра пирĕн экономика япăхса пĕтсе ларĕ, çапла вара совет халăхĕ хирĕç тăма пултараймĕ тесе ĕмĕтленнĕ. Анчах вăрçă ĕçĕсем пирĕн çĕршыв çав тери вăйлă та çирĕп пулнине кăтартса пачĕç. Вăкланман укса çинчен калакан юмах пурнăçа кĕнĕ пек туйăнать. Пирĕн совет çĕршывĕ совет тенкипе Тăван çĕршыва захватчиксенчен хӳтĕлесе хăварас ĕçре тата халăхсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре мĕн чухлĕ ытларах расходлать, совет çĕршывĕн пуянлăхĕ, унăн финанс хăвачĕ çавăн чухлĕ ытларах ӳссе пырать.

Халăх вăйĕн çăлкуçĕ иксĕлми тулăх. «Совет строй, — тенĕ Сталин юлташ, — çĕршыва мирлĕ строительство çулĕсенче экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен çĕклес ĕçе организацилекен чи лайăх форма кăна мар, вăрçă вăхăтĕнче тăшмана хирĕç тăма халăхăн мĕнпур вăйĕсене мобилизацилекен чи лайăх форма та пулса тăчĕ».

Пирĕн Россия Федерацийĕ нихçан пулман вăрçă вăхăтĕнче бюджетăн пĕтĕм хисепĕнчен 73 процентне социаллă-культурăллă мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ çĕре пани пирĕн совет правительстви тата Сталин юлташ ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕç çине вăрçă вăхăтĕнче те тимлĕн çавăрăнса пăхни çинчен калаçа парать. Çакăнта курăнать те ĕнтĕ пирĕн çĕршывăн тата пирĕн совет государстви стройĕн хăвачĕ. Бюджет цифрисем çакна кăтартаççĕ: 1944 çул наука, культура тата искусство çĕнĕрен çĕкленсе кайнă çулталăк, халăха сутта кăларас ĕçре халăх сывлăхне сыхлас ĕç малалла аталаннă çулталăк пулса тăрать.

Депутат юлташсем! Чăваш АССР-ĕнчи Çĕрпӳ суйлав округĕнче суйланă депутат пулса тăрса, эпĕ сире [illegible] кайнă фашистсене çĕнтерессишĕн пирĕн совет халăхĕ мĕнле кĕрешнине хамăрăн республика примерĕпе кăтартса парасшăн.

Чăваш халăхĕ отечественнăй вăрçă фрончĕсенче çапăçакан хăйĕн ывăлĕсем патне яна çырура çапла каланă: «Чăваш халăхĕн ывăлĕ васка! Хамăрăн тăван çĕршыври ытти халăхсен мухтавлă ывăлĕсемпе пĕрле—Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе пĕрле хамăрăн çĕршыва тăшманран хăвăртрах тасат! Герой пул! Нимĕçе ăçта куратăн, çавăнтах пĕтер!

Çакă темиçе çĕр пин çын алă пуснă çырура чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем умĕнче фронтшăн тылра ывăнма пĕлмесĕр, вăйсене икĕ-виçĕ хут ӳстерсе ĕçлеме тупа турĕ.

Чăваш халăхĕ хăйсен авалхи тăванĕсене — Степан Разинпа Емельян Пугачевпа пĕрле халăхăн телейне кĕрешсе пуçне çĕкленнĕ паттăрĕсене ялан асра тытать. Анчах та халăхăн паттăрлăхĕ нихçан та хальхи вăхăтри пек, отечественнăй вăрçă кунĕсенчи пек, уçăмлăн палăрман. Ахальтен мар ĕнтĕ Белинский историн йывăр кунĕсенче халăхăн шухăш-кăмăлĕ туллиреххĕн те уçăмлăраххăн палăрать тесе каланă.

Чăваш халăхĕн ывăлĕсем, Совет Союзĕнчи тăванла халăхсем пекех, Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулса гитлерла захватчиксене хирĕç хастарлăн та хăюллăн çапăçаççĕ. Вĕсем хушшинче Совет Союз Геройĕсем вуннă ытла, орденсемпе тата медальсемпе наградăланисем 10.000 çын ытла шутланаççĕ. Вĕсем отечественнăй вăрçă фрончĕсенче чапа тухрĕç.

Чăваш республикинчи рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци, тылра хастарлăн ĕçлесе, çĕнтерӳ хĕçпăшалне тупаççĕ. Чăваш республикинчи государство промышленноçĕ хăйĕн планне 118 процент тултарчĕ, продукци туса кăларассине вăрçăччен-хи 1940 çулхинчен 3,5 хут ӳстерчĕ. Апат-çимĕç промышленноçĕ производство планне 109 процент, промысла кооперацийĕ 107,5 процент тултарнă. Промысла кооперацийĕ 1943 çулта 1942 çулхинчен 13 миллион тенкĕлĕх ытларах продукци панă. Вырăнти промышленность продукци туса кăларассине, 1940 çулхипе танлаштарсан, 35 процент чухлĕ ӳстернĕ. Фронт çывăхĕнчи районсенчен куçарса килнĕ предприятисене те вăхăтра ĕçе янă. Халĕ вĕсем пирĕн республикăн тăван предприятийĕсем пулса тăраççĕ.

Чăваш республикинчи промышленность туса кăларакан продукци тӳррĕмĕнех е урăх майсемпе гитлерла пуçкасакансене пĕтернĕ çĕре кайни чăваш ĕççыннисене тулли кăмăлпа савăнтарать. Чăваш республикинчи нумай предприятисем пĕр хутчен кăна мар ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн, ВЦСПС-ăн тата Халăх Комиссариачĕсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсене илнĕ. Чăваш республикинчи колхозникĕсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, колхозсен хирĕсенче хастарлăн ĕçлеççĕ. Республикăри колхозсем 1943 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене иртнĕ çулсенчинчен лайăхрах тата организованнăрах туса ирттерчĕç.

Сурăхи плана 18.860 гектар чухлĕ ирттерсе тултарнă, кĕраки плана 9.000 гектар чухлĕ ирттерсе пурнăçланă. Тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе вăрçăччен-хи 1940 çулхинчен пĕр уйăх маларах вĕçленĕ. Государствăна тыра парас ĕçе 1940 çулхинчен виçĕ уйăх маларах пурнăçланă. Республикăри колхозсем МТС-сене 1944 çулшăн натуроплата тӳлес шутпа тата Хĕрлĕ Çарăн тырпул фондне 105.000 пăт тыра пачĕç.

Республика колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи икĕ çул хушшинче республикăри колхозсенче майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 58,7 процент, сурăхсен хисепĕ 99,7 процент ӳснĕ. 1943 çулта государствăна 1944 çулшăн аванс шучĕпе 42.000 пуç ытла выльăхсем панă.

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене 7000 пуç ытла выльăх-чĕрлĕх янă. Сывăх вăхăтрах вăл районсене выльăхсем тата 25.000 пуç яратпăр.

Сталин юлташ совет çыннисен хастарлă ĕçне пысăка хурса хакланине ответлесе, республикăри колхозниксем хăйсем перекетленĕ тырра государствăна сутрĕç. Государствăна тыра сутасси колхозниксемпе колхозницăсен патриотла массăллă çĕкленĕвĕ пулса тăчĕ. Çак хисеплĕ ĕçе республикăри пур колхозсем те тата çĕр пин колхозник ытла хутшăнчĕç. Пирĕн республикăри колхозсемпе колхозниксем государствăна 2 миллион та 500 пин пăт ытла тыра сутрĕç. Хамăрăн Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕсем Гаязов, Арсентьева, Краснов, Маркиянов тата ытти нумай юлташсем хăйсен перекетленĕ тыррийчен 100—175-шер пăт государствăна сутрĕç.

Республикăри темиçе çĕр колхоз иртнĕ 1943 çулта ялхуçалăх культурисен тухăçне тата выльăх-чĕрлĕхсен йышĕпе вĕсен продуктивноçне ӳстермелле заданисене чылай ирттерсе тултарчĕç. Республикăри вуншар колхоз гектартан 100-шер пăт тыра туса илчĕç.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем хăйсен патриотла тивĕçне хастарлăн ĕçлесе кăна мар, çавăн пекех тата хăйсем перекетленĕ укçа-тенке Тăван çĕршыва сыхлана çĕре парса та чылай пурнăçа кĕртеççĕ. Республикăри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар валли танксен колоннипе самолетсем тума 82. миллион тенкĕ укçа пухса пачĕç. Пирĕн колхозниксем, хăйсен запасĕсенчен Хĕрлĕ Çар фондне 120.000 пăт тыра, аш-какай, апат-çимĕç тата ытти çимĕçсем нумай парса, Сталин юлташран икĕ хутчен салам илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Тăван çĕршывăн патриочĕсем Сарсков, Дубровин, Васянин, Пугачев тата ытти юлташсем хăйсем перекетленĕ укçаран çĕршер пин тенкĕ Хĕрлĕ Çар валли хĕç-пăшалсем туна çĕре пачĕç. Колхозник Дубровин хăй укçипе илнĕ самолета хăйĕн ывăлне панă. Колхозница Ширманова хăй укçипе илнĕ танка хăйĕн ывăлне — танкиста панă.

Халăх хушшинчи патриотла туйăм Военнăй заемсене сарнă вăхăтра та пысăккăн палăрчĕ. Заема пĕр хушшинчех 137 миллион тенкĕлĕх сарнă. Ку вăл пĕррмĕш Военнăй заема сарнинчен пухăннă укçа-тенкĕрен икĕ хут ытларах пулчĕ. Ялсенче заема вăрçăччен-хи 1940 çулхинчен çирĕм хут ытларах сарнă. Ялсенче заем укçине виçĕ кулхушшинчех заем сыранса илнĕ пĕтĕм хисепрен 75 процент чухлĕ пухнă.

Чăваш халăхĕ çĕнтерӳ тавса сталинла аслă шанчăкпа çурăнать, хăйне мĕнпур вăйне фронта пулăшнă çĕре, çĕнтерӳ тунă çĕре парать. Чăваш халăхĕ фронтовиксем патне çырнă çырура çапла каланă: «Атăл Атăл шывĕ Каспи тинĕсĕнелле хăвалтлăн тапса тăнă пекех, пирĕн халăх фронта тыра, аш-какай, сĕт-çу тата промышленноçа чĕртаварсем тулăххăн ярса тăрать. Атăл шывĕ нихăçан та типес çук, пирĕн халăхăн вăйĕ те нихăçан та иксĕлес çук».

Чăваш республикин бюджетĕнче социаллă-культурăллă мероприятисене анлăн сарса ыйма палăртнă. 1944 çулхи бюджетра çав мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ çĕре каякан укçа-тенкĕ хисепне 67 процентран 79 процента çити ӳстерме палăртнă. Вăл шутран халăха сутта кăларас ĕçе каякан укçа-тенкĕ хисепĕ 43 процентран 56 процента çити ӳсет. Халăх сывлăхне сыхлана çĕре каякан расходсем кăçал, 1940 çулхипе танлаштарсан, 30 процент ӳсеççĕ. 1943 çулта ачасен яслисенчи вырăнсен хисепĕ 66 процент ӳснĕ, ачасен садĕсене çӳрекенсен хисепĕ 45,5 процент ӳснĕ.

Совет бюджетĕнче çар çыннисен семьисемшĕн тăрăшни уçăмлăн палăрса тăрать. Чăваш республики тăрăх çар çыннисен семьисене государство укçа-тенкисенчен 78 миллион тенкĕ ытла пенсисемпе пособисем панă.

Фронтовиксен семьисене пулăшас тĕлĕшпе совет общественноçĕ пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ. Фронтовиксен семьисене тĕрлĕ апат-çимĕçсем 117.424 пăт, выльăх-чĕрлĕхсем 20.160 пуç, кайăк-кĕшĕксем 15.000 пуç панă. Çĕр участокĕсене акса хăварма çĕрулми вăрлăхĕ кăна 23.100 пăт панă. Çар çыннисен семьисем 185.000 кубометр вутă илнĕ.

Пирĕн республика бюджетне оборотран илекен налог шучĕпе 1943 çулта 20 миллион тенкĕ чухлĕ ирттерсе тултарнă пулин те, тупăшсенчен илекен укçа-тенкĕ, 1940 çулхипе танлаштарсан, 3.5 хут ӳснĕ пулин те тата государство бюджетне тата вырăнти бюджета кĕрекен укçа-тенкĕ хисепĕ 1940 çулхинчен 72 процент ытларах ӳснĕ пулин те, эпир бюджетри укçа-тенкĕне ӳстермелли майсемпе тата резервсемпе пĕтĕмпех усă кураймăн-ха.

Пирĕн республикăри союзлă промышленность 1943 çулхи плана тултарса çитереймерĕ, çапла вара бюджета укçа-тенкĕ парса çитереймерĕ. Республикăра вырăнти тата кооперативлă промышленноçа аталантарас тĕлĕшпе те мĕн кирлипе пĕтĕмпех туман-ха. Халăхран пухмалли налогсене те пухса çитермен. Продукци хакне йӳнетессишĕн, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн тивĕçлипе кĕрешни çук. Продукци пахалăхне лайăхлатасси çине çителĕксĕр çаварăнса пăхаççĕ.

Бюджета пурнăçа кĕртесси, унта халăх хуçалăхĕн пĕтĕм отраслĕсен ĕçĕ тĕкĕр çинчи пек палăрса тăрать. финанс органĕсене, совет организацийĕсене çине тăрса ĕçлеме, пирĕн республикăри мĕнпур халăхăн вăйĕсене пĕтĕçтерме хушать.

Эпĕ РСФСР Верховный Совечĕн сессине пирĕн чăваш халăхĕ, Россия Федерацийĕнчи мĕнпур халăхсем пекех, совет правительстви, пирĕн аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ тимлĕн тăрăшнине фабрикăсемпе заводсенче тата колхозсенче татах та ытларах тăрăшса ĕçленипе ответлĕ, Хĕрлĕ Çар валли тăшмана çĕнтерме мĕн кирлисене пурне те парĕ, тесе шантарса калатăп.

Депутат юлташсем! Эпĕ кунта РСФСР Халăх Комиссариачĕсен ĕçĕсем çинчен кăштах палăртасшăн. Плансене вăхăтра туни тата вĕсене вырăнсене вăхăтра çитерни питех те кирлĕ ĕç пулса тăрать. Анчах та хăшпĕр Халăх Комиссариачĕсем хăйсене пăхăнакан предприятисен ĕçне планлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Сăмахран, РСФСР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕ 1944 çулхи пĕррмĕш кварталти плансене февралĕн 18-мĕшĕнче кăна вырăнсене янă. 1943 çулхи производство планне те, продукци хакне йӳнетмелли, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плансене те 1943 çулхи август уйăхĕнче кăна вырăнсене янă пулнă.

Вырăнти промышленность Халăх Комиссариатĕнче те ĕçсем çавăн евĕрлех пулса пыраççĕ. Вăл та планпа палăртнă лимитсене темиçе хутчен яра-яра парать тата улăштарса тăрать. Çапла, 1943 çулхи пĕррмĕш кварталти лимита виçĕ хутчен улăштарнă. 1944 çулхи пĕррмĕш кварталти плана халь икĕ хутчен улăштарнă та ĕнтĕ.

Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ çинчен те калама кирлĕ тесе шутлатăп. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Чăваш республикинчи промышленность нумай ӳсрĕ, çавна пула вара электроэнерги те темиçе хут ытларах кирлĕ пулчĕ. Шупашкарти электростанци промышленность тата пурăнмалли çуртсемпе коммуналлă предприятисен ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултараймасть. Электростанци ĕçне лайăхлатма, Оборонăн Государственный Комитечĕ йышăннă тăрăх, çак Халăх Комиссариачĕ 1943 çулхи иккĕмĕш кварталта дизелсене юсама запаслă пайсем, вăл шутра «зульцер» системиллĕ дизель валли запаслă пайсем тăратмалла пулнă. Анчах та çав дизеле юсама кирлĕ запаслă пайсене республика ку таринчен те илме пултараймарĕ-ха.

Тепĕр ыйту. Пирĕн республикăри аш-какай промышленноçĕ Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче 5 хут ӳсрĕ. Вăл бюджет умĕнчи хăйĕн обязательствисене те чылай ирттерсе тултарчĕ. Анчах та аш-какай комбиначĕ валли çĕнĕ çурт çук тата çĕнĕ оборудованисем илместпĕр. Кăçал Канашра малтан машинно-тракторнăй мастерской пулнă вырăнта çĕнĕрен аш-какай комбиначĕ тăвас ĕçе пуçармалла. Çак ĕçе туса эпĕ сессирен 500.000 тенкĕ уйăрса пама ыйтатăп.

Суйлавçăсем мана Шупашкарти театр çинчен те ыйту лартма хушрĕç. Хулара пурăнакан ĕççыннисен йышĕ нумай ӳсрĕ, хулара çĕнĕ предприятисем ӳссе ларчĕç, вĕренекенсен йышĕ те ӳсрĕ. халăхăн культура ыйтăвĕсем палармаллах ӳсрĕç. Апла пулин те театр халĕ те юрăхсăр та питех те начар çуртра вырнаçнă. Халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, эпир çĕнĕ театр тăвасси çинчен ыйту лартмастпăр, анчах театрăн çуртне юсаса аслăлатма укçа уйăрса пама ыйтатпăр.

РСФСР Верховный Советĕнчен эпĕ Шупашкар хулинчи театра юсаса лайăхлатма 1944 çулта 500.000 тенкĕ таран укçа уйăрса пама ыйтатăп.

Депутат юлташсем! Эпĕ те Ибрагимов депутат РСФСР-ăн Верховный Совета пăхса тухма тата çирĕплетме тăратнă 1944 çулхи бюджетне, бюджет комиссийĕ кĕртнĕ улшăнусене шута илсе, çирĕплетме сĕнни çумне, çавăн пекех тата 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш çулсенчи бюджетсене пурнăçа кĕртни çинчен калакан отчетсене çирĕплетме сĕнни çумне хутшăнатăп.

Пирĕн совет халăхĕ вăрçă кунĕсенче хăйĕн Тăван çĕршывне, Совет Союзне, Сталин юлташа чĕререн юратнине тата парăннине кăтартса пачĕ.

Россия Федерацийĕнчи халăхсем Совет хĕçпăшалĕ ют çĕршыв пусмăрçисене татах та вăйлăн çĕмĕртĕр тесе, совет промышленноçĕ татах та лайăхрах ĕçлетĕр тесе, колхозсен çĕрĕ татах та тухăçлăрах тырпул çитĕнтертĕр тесе мĕн тума май пуррине йăлтах тăвĕç. РСФСР-ти ĕççыннисем фронтовиксен семьисемшĕн тата та ытларах тăрăшĕç. Пирĕн фронтра çапăçакан тăвансем çакна пĕлсе тăччăр: совет правительстви тата совет халăхĕ воинсен семьисемшĕн халĕ тăрăшнă пек нихăçан та, нихăш вăрçăра та тăрăшни пулман-ха. Пирĕн халăх малта тăракан этемлĕхĕн тăшманне—Германи фашизмне çĕнтерес аслă ĕçшĕн нимĕн те шеллемĕ.

Çĕнтерĕвĕн çутă кунĕ çывхарса килет, ун патне пире генилĕ çулпуçăмăр тата полководец Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пырать. (**АЛĂ ÇУПАÇÇĔ**).

Шалти ĕçсен Наркомачĕпе Государство хăрушсăрлăхĕн Наркомачĕн работникĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăлани

Правительство ятарласа хушнă ĕçсене питех те лайăх пурнăçа кĕртсе пынăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх çаксене наградăланă:

1-мĕш степень СУВОРОВ орденĕпе: Государство хăрушсăрлăхĕн генеральнăй комиссарне Л. П. БЕРИЯНА, Государство хăрушсăрлăхĕн 2-мĕш рангри комиссарне Б. З. КОБУЛОВА, Государство хăрушсăрлăхĕн 2-мĕш рангри комиссарне С. Н. КРУГЛОВА, Государство хăрушсăрлăхĕн 2-мĕш рангри комиссарне И. А. СЕРОВА.

1-мĕш степень КУТУЗОВ орденĕпе — А. Н. Аполлонов генерал-полковника, Государство хăрушсăрлăхĕн 2-мĕш рангри комиссарне В. Н. Меркулова, И. И. Пияшев генерал-майора;

2-мĕш степень СУВОРОВ орденĕпе — Государство хăрушсăрлăхĕн 2-мĕш рангри комиссарне В. С. Абакумова, Милицин 2-мĕш рангри комиссарне Г. Е. Грудкона, Н. П. Стаханов генерал-лейтенанта тата ыттисене те, мĕнпурĕ 13 çынна;

2-мĕш степень КУТУЗОВ орденĕпе — 17 çынна;

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 79 çынна;

1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе — 47 çынна;

2-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе — 61 çынна;

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе — 120 çынна;

«За отвагу» медальпе — 259 çынна;

«За боевые заслуги» медальпе — 111 çынна наградăланă. (ТАСС).

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВАРÇА ГЕРОЙĔСЕМ

Икĕ хут Совет Союз Геройĕ гварди майорĕ Александр Игнатьевич Молодчий. А. ЛЕСС фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Эфиопи посланникĕ Л. Таэзас господин ĕççынни депутачĕсен Сталинград хула Совет исполкомĕн председательне Д. М. Пигалев юлташа Эфиопи императорĕ Хайле Селасие Сталинград хулине халалана парнене пани

Çак март уйăхĕн 7-мĕш кунĕнче Мускавра Эфиопин чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ Л. Таэзас господин ĕççынни депутачĕсен Сталинград хула Совет исполкомĕн председательне Д. М. Пигалев юлташа щит пачĕ. Ку щит вăл Эфиопи императорĕ Хайле Селасие Сталинград хулине халалана парне пулса тăрать. Хайле Селасие император ку щита Хĕрлĕ Çар Сталинградшăн героила кĕрешнине ĕмĕрлĕхе палăртса хăварас кăмăлпа парненĕ. Л. Таэзас господинпа Д. М. Пигалев юлташ пĕр-пĕрне саламлă сăмахсем калана.

Щит пана чухне çаксем пулнă: СССР Наркоминделĕн Çывăхри Хĕвелтухăç отделĕн заведующийĕ А. И. Лаврентьев, СССР Наркоминделĕн протокол отделĕн заведующийĕн ĕçĕсене туса тăракан Г. И. Фомин, СССР НКО-н тулашри çыхăнусен отделĕн начальникĕ В. Н. Евстигнеев генерал-майор, çавăн пекех тата Эфиопи миссийĕн пĕрремĕш секретарĕ Т. Рорс господин тата иккĕмĕш секретарĕ Д. Тессема господин.

ВЦСПС-ра

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ, пĕр промышленность Наркомачĕн уйрăм отраслин работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод уйрăмах лайăх ĕçленине палăртнă.

Кроса 126.962 çын хутшăннă

Профсоюзпа комсомолăн Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа тунă йĕлтĕрлĕ кросĕ вĕçленчĕ. Унта республикăри 126.962 çын хутшăннă. Вĕсенчен 20.925-шĕ — комсомолецсем. Кроса хутшăннисенчен 114.910 çын ГТО тата БГТО нормисене панă. Етĕрне, Елчĕк, Çĕмĕрле, Шупашкар, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр районĕсенче кроса çамрăксем уйрăмах йышлăн хутшăннă.

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

Уйăхлăха хутшăнса

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Пăвайлĕнчи «Большевик» колхоз иртнĕ çулта пахча-çимĕçсем туса илес тĕлĕшпе аван ĕçленĕ. Гектартан купăста 174 центнер, кишĕр 22 центнер пухса илнĕ.

Выранти удобренисем хатĕрлесе турттармалли уйăхлăхра уя 9.765 лав тислĕк кăларнă, 130 центнер кĕл, 35 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Çуракине хатĕрленнĕ май агрокружокран 28 çын вĕренсе кăларнă. Вĕсенчен сухаçăсем 20 çын, акакансем 13 çын, бровизаторсем — 5 çын.

Колхоза çуракинче 3 сеялка, 20 плуг, 30 сӳре кирлĕ пулать. Вĕсене тимĕрçĕ П. Осипов юлташ тĕплĕн юсанă. Çуракине хатĕрленсе çитмелли уйăхлăх пуçланнăранпа ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарьне мĕнле юсанине тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслуре колхоз çуракине аван хатĕрленнине палăртнă.

Вăрлăхсене çителĕклĕ таран уйăрса хунă, вĕсене икшер хут сортланă. Вăрлăхсен шăтас пахалăхĕ те аван.

Кăçал çĕнĕрен 67 хăмăт, 36 ĕнерчĕк тунă, çавăн пекех 120 михĕ хатĕрленĕ.

Колхозниксем, çуракине хатĕрленсе çитмелли уйăхлăха хутшăнса, кăçал вăйлă тырпул туса илес тесе татах та хĕрӳллĕнрех ĕçлеме тытăнчĕç.

Анчах та кунта туртăм вăйĕ çине çителĕксĕр пăхаççĕ. Колхозра ĕç лашисем 77 пур. Вĕсенчен 40 лаша ĕçе юрăхсăр, 3 лашине йăтса çĕç тăратаççĕ. Апла пулин те начар лашасене паянхи куна çитсе те уйрăм апат çине тăратман.

В. ВЕСЕЛОВ.

Кăтарту кĕтеççĕ

МУРКАШ. (Хамăр корр., телефонпа). Ярапайкассинчи «Красная Чувашия» колхоз районра ыттисенчен çирĕпрех колхоз шутланать. Анчах унăн та 6 центнер сĕлĕ, 4 центнер пăрçа, 2 центнер кантăр вăрри, 2 центнер клевер вăрри, утă-лăх викка вăрлăхĕ 18 центнер тата çĕрулми 64 центнер çитмест.

Апла пулин те, колхоз правленийĕ çак вăрлăхсене пухса çитерес тесе ку таранччен нимĕн те туман. Правлени председателĕ Н. Ядыков юлташ курса кайнă, унăн вырăнне юлнă С. Енисеев хăйне вăхăтлăх çын тесе шутлать. Вăл çитмен вăрлăхсене кӳршĕри колхозсенчен улăштарса илме тата колхоз членĕсенчен кивçен пухма тăрăшмасть. Районран нимĕнле кăтарту та çук, тесе ларать вăл. Районран чăн та нимĕнле кăтарту та çук. Ишлейсем — вĕсем Муркаш районĕсем, тесе лараççĕ.

Колхоз вăрлăхсене кирлĕ пек тасатман, сĕлĕ тата тулă та кондицие лармаççĕ. Пăрçана «змейка» çук пирки тасатман. — Аллăпа суйласа вăрахо пырать. — теççĕ.

«Красная Чувашия» колхозла кӳршĕллĕ «Автогигант» колхозăн та тулă, кантăр вăрри, клевер вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Çитмен вăрлăхсене хатĕрлесси çинчен кунта та шутламаççĕ.

Колхозăн çапса шĕкĕлчемен клевер выртать, анчах ăна шĕкĕлчеме тытăнман.

«Красная Чувашия» колхоз уя тислĕк кăлармалли плана тултарман, «Автогигант» колхоз кайăк-кĕшĕк тислĕкне пухма тытăнман. Çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăхан çурри иртрĕ, кунта халь те хускалмаççĕ-ха. «Автогигант» колхозра юсамалли 9 плугран 2-шне кăна юсанă, ытти çитменлĕхсем те нумай. Фронтовой уйăхлăха кирлĕ пек хутшăнса, çуракине сăмахпа мар, ĕçпе хатĕрленмелле.

Т. ИВАНОВ.

Çуракине хатĕр

КАНАШ. «Динамо» колхоз членĕсем Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа панă приказне кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн тăрăшса ĕçленипе ответлеççĕ.

Паянхи куна колхоз вăрлăхсене ыглашшипех хатĕрлесе, тасатса хунă. Вăрлăхсем 95—98 процент шăтаççĕ. Ялхуçалăх машинисене — 14 плуг, 16 сӳре, 2 сеялка юсаса хунă. Кашни бригадăна участоксемпе пĕрле лашасем те çирĕплетсе панă. Лаша хатĕрĕсем пурте юсавлă. Çуракине хатĕрленнĕ май колхозниксене агрокружокра вĕрентеççĕ. Ку ĕçе учитель П. Г. Григорьев юлташ лайăх ертсе пырать.

Колхозра çамрăккисем те, ваттисем те пикенсех ĕçлеççĕ. 63 çулхи П. Осипов, ут тавраçĕсене тĕплĕн юсаса çитерчĕ. Çавăн пекех Федотов, Сергеев, Петров, П. Ефремова, Ф. Егорова юлташсем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Кăçал çĕнĕ культура кок-сагыз акма звено уйăрса хунă. Ăна вăрçă инваличĕ Романов юлташ ертсе пырать.

Т. ТУРХАН.

Вăйлă тырпул звени

СОВЕТСКОЕ. «Ыраш» колхозри комсомол организацийĕнче пурĕ 13 комсомолец. Вĕсем пурте тенĕ пекех 14—15 çулхи çамрăксем. Комсомол организацийĕн секретарĕ пулса фронтран аманса таврăннă Иванов юлташ ĕçлет. Комсомол организацийĕ 1943 çулта ялхуçалăх ĕçĕнче колхоза яланах пулăшса пынăшăн ВЛКСМ райкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Хĕрлĕ Ялава алла илнĕ хыççăн комсомол организацийĕ тата тăрăшарах ĕçлеме тытăнчĕ. Комсомолецсем ялхуçалăх ĕçне вĕçленĕ хыççăнах çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Вăçĕ комсомолец тăтăшах çĕртме сухи тунă çĕрте ĕçлерĕç.

Çак хĕлре комсомолецсем уя 1.800 лав тислĕк кăларнă, 25 центнер кĕл, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Кунсăр пуçне вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен звено (унта 6 комсомолец) тунă. Ăна комсомол организацийĕн секретарĕ Иванов юлташ ертсе пырать. Çак звено çумне колхоз уйрăм лашасем çирĕплетсе панă. Уйрăм çĕр участокĕ çине вĕсем кăçал пăрçа тата тулă акма шутлаççĕ, вăрлăхĕсене хатĕрлесе хунă та ĕнтĕ. Çав участок çинче кашни гектартан 150 пăтран кая мар тĕштырă туса илес тесе комсомолецсем унта 160 лав тислĕк кăларнă, ытти удобренисем те чылай хатĕрленĕ.

Р. СЕМЕНОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Колхоз председателĕ васкамасть

ШĂХАСАН. Малти Ăнтавăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозра çуракине кирлĕ пек хатĕрленмеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ çак тарана çитсе те 13 плугран 8-ăшне çеç юсанă. Сӳресемпе сеялкăсене юсассине аса та илмеççĕ. Выранти удобренисене пухасси те çителĕксĕр пырать. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пухма халĕ те тытăнман, уя тислĕк кăларас тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлемеççĕ, пурĕ те 100 лав çеç кăларнă. Вăрлăх сортлас ĕç те япăх пырать.

Лаша хатĕрĕсем çителĕксĕр, пуррисем те ăçта килчĕ унта сапаланса выртаççĕ. Колхоз председателĕ Михайлов юлташ çаксем çинчен нимĕн те шухăшламасть.

Г. ЕФИМОВ.

Ӳкерчĕк çинче: Шупашкар районĕнчи «Память Ленина» колхозри стахановец Ф. Егоров (хăмăт тӳрлетет). Унăн 5 ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

ÇĔРУЛМИ ТĂРРИНЕ КАСАÇÇĔ

Елчĕк районĕнчи «Автогигант» колхозра 52 килте çĕрулми тăрри касса хатĕрлеççĕ. Колхоз членĕсем нумайĕшĕ 6—8-шар килограмм касса хатĕрленĕ. Каснă çĕрулми тăррине мĕнле сыхласа усрамаллине вĕсем лайăх пĕлеççĕ. Унта çак ĕç çинчен кашни бригадăрах канашлусенче ăнлантарса панă.

Комсомольски районри «Дуброва» колхоз членĕсем те çĕрулми тăррине вăрлăхлăх тăрăшсах касса хатĕрлеççĕ, ку ĕçе пĕтĕмпе 50 хуçалăх ытла хутшăннă. Колхоз правленийĕ йышăннă тăрăх, колхоз членĕсене вăрлăхлăх çĕрулми тăррине касса хатĕрлесе панăшăн ĕçкунĕсем уйăрса параççĕ.

Çĕрулми тăрри касса хатĕрлес ĕçе колхозсенчи комсомолецсем шкул ачисем тата пионерсем активлăн хутшăнаççĕ.

Н. К-в.

Тăвай районĕнчи канашлура

Çак кунсенче Тăвайра ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ВКП(б) райкомĕн секретарĕ А. Молоствов юлташ 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе умра тăракан задачăсем çинчен доклад туса пачĕ. Доклад тăрăх тухса калаçакансем хăйсен ĕçри опычĕ çинчен тата кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа пачĕç.

Тухса калаçнисенчен «Красная Чувашия» колхозри овощеводăн Т. В. Васильев юлташăн сăмахне уйрăмăнах палăртмалла. Васильев юлташ пахча-çимĕç туса илес тĕлĕшпе 14 çул ĕçлет. — Пирĕн çĕр çинче пур тĕрлĕ çимĕçсем те пулаççĕ, тет вăл, — вĕсене тăрăшса пăхни кăна кирлĕ. Иртнĕ çул «Красная Чувашия» колхоз пахча-çимĕçсенчен 253.000 тенкĕ тупăш илнĕ. 10 çул каярах кунта купăста кăна туса илме пултарнă, халĕ унта 20 ытла тĕрлĕ çимĕçсем ӳсеççĕ. Пахча-çимĕçсене иртнĕ çул 8 гектар çинче туса илнĕ, кăçал 15 гектара çитересшĕн. Иртнĕ çул çырла-çимĕçсем кăна 150 пăт ытла пухса илнĕ. Юнашар колхозсене пама 4.000 тĕп ытла çамрăк йывăçсем пур. Васильев юлташ хăй тухса калаçнă сăмахĕнче кашни колхозрах пахча, сад ĕрчетме чĕнет. Канашлура пурĕ 26 çын тухса калаçрĕç.

Тăвай районĕ кӳршĕри Елчĕк тата Вăрмар районĕсемпе ăмăртăва тухма йышăнчĕ. Çав районсен представителĕсем те канашлура пулчĕç.

Çуракине кĕске срокра ирттерес тата вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе канашлу обязательствăсем йышăнчĕ.

Н. УСТАНОВ.

Ют çĕршывсенче

Ют çĕршывсенчи хаçатсем Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи çыхăнусем çинчен мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăра тухакан нумай хаçатсем премири тĕлĕшпе Финляндие сĕннĕ совет условийĕсене ырлаççĕ. Вĕсем йывăр условисем мар, теççĕ. Нумай хаçатсем Финляндие Совет условийĕсене йышăнассине вăраха ярассинчен сыхланма хушаççĕ.

«Вашингтон пост» хаçат финсене хăйсен умĕнче тăракан ыйту çинче тӳррĕн пăхма сĕнет. Хаçат çапла çырать: нимĕçсен палачĕсем Финляндипе цивилизацийĕ хирĕç пыраççĕ, финсен нимĕçсене хирĕç тăрас пулать. Финляндин гитлеровецсене пĕтерсе лартма ытларах пулăшсан, вăл хăйĕн интересĕсене тулаш шута илтерме пултарать.

«Таймс» хаçат (вăл Лос-Анжелесра тухать) çапла çырать: финсен хăйсене сĕннĕ условисене часрах йышăнмалла; мĕншĕн тесен çав условисене йышăнмасан вĕсен пĕр сăмахсăрах парăнмалла пулать, оккупацие блокада тата ишĕлӳсене выçлăх вĕсене пăрăнмалла туса хурĕç. Хаçат шухăшĕпе, Финлянди çав условисем тĕлĕшпе решени йышăнасси Финлянди правительствинчи нацистла çынсене пула тата Германи хĕснипе пула вăраха тăсăлса пырать.

Рацвопа, ăнлантарса паракан Сунит çапла калапă: США политика ыйтăвĕсене шута илсе çеç мар, вăрçăпа экономика ыйтăвĕсене шута илсе те Финляндие вăрçăра тăрахтарасшăн.

СИДНЕЙ, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). «Сидней морнинг геральд» хаçат хăйĕн редакци çырнă статйинче çапла калать:

«Совет Союзĕ сĕннĕ условисем тĕлĕшпе Финлянди правительстви ăслă пулас выранне ытларах мăнкăмăлланса тăрать пулмасла»...

«Хĕрлĕ Çар Нарвăпа Псков патĕнче, Эстонире кĕрсе каймалли çул çинче тăрать ĕнтĕ, — тесе çырать хаçат. — Çапла вăл Финляндие Германирен уйăрса пырать. Чăнах та, Сталин вăрçă ыйтăвĕсене çеç шута илес пулсан, вăл Финлянди пĕтсе ларассине шанса кĕтсе тăма пултарнă пулĕччĕ, ыйтусене Финляндипе каласса татасси ăна пĕртте интереслентермен пулĕччĕ»: Çавăнпа та, тесе çырать хаçат, Совет Союзĕн сĕнĕвĕсем Финляндие шелленине кăтартса тăраççĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: мĕнпур фронтĕпех разведка чаçĕсем кĕрешнĕ. Фронт линийĕнче нимĕнле улшăнусем те пулман. Ĕнер йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Тулон хулине атакăланă, доксем, суту-илӳ суднисем тата горючи склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Союзниксен авиацийĕ çавăн пекех тата тăшманăн ытти объекчĕсене чылайĕшне атакăланă.

ÇУРÇĔР ИТАЛИРИ ПĔТĔМĔШЛЕ ЗАБАСТОВКА

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: оккупацинчи хулисенчи рабочисене мартăн 8-мĕшĕнчен ĕçе тухма хушнă пулин те, Çурçĕр Италире 6 миллион рабочи çапла ĕçлемеççĕ.

Забастовка тăвакансем çакăн пек требованисем параççĕ: влаçсем итальянецсене çар службине мобилизацилеме хушнине пăрахăçа кăлармалла, итальянец рабочийĕсене вăйпа Германие илсе кайма пăрахмалла тата салтаках Германие прĕксĕр илсе кайнă нумай пин рабочие каялла Италие ямалла.

Нимĕçсем забастовка тăвакансене хаярăн тыткаласшăн хăратаççĕ. Милана Туринри урамсенче заводсенче нимĕç çарĕсем пралук карса тухнă тата пулеметсем лартнă.

НИМĔÇСЕН ВИÇĔ ГЕНЕРАЛНЕ ПЕРСЕ ПĂРАХНĂ

«Моргентидинингеп» ятлă хаçат Берн хулинчен çапла пĕлтерет: «Гитлер приказĕ тăрăх, нимĕç авиацийĕн виçĕ генералне персе пăрахнă. Вĕсем çаксем: генерал-майор Рюдигер фон-Халлин, генерал-майор Фельк тата генерал-лейтенант Фукс. Вĕсене тăшмантан хăраса ӳкнĕ тесе айăпланă. Невель хули патĕнче пынă çапăçусем вăхăтĕнче çак генералсене пысăк çухатусене пăхмасăрах çапăçма хушнă. Усă пуласси пачах шанма пулман. Генералсем, çынсем калапă тăрăх, иккĕленсе тăнă. Çавăншăн вĕсене хирти çар судне панă та». (ТАСС).

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри экспедицилле вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: мартăн 6-мĕшĕнче кăнтăрла американецсен 8-мĕш авиаци корпусĕнче тăракан йывăр бомбардировщиксен питĕ пысăк соединенийĕсем, истребительсен пысăк соединенийĕсем хӳтĕлесе пынипе, Берлин районĕнчи объектсене атакăланă. Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Германири объектсене март уйăхĕнче кунпала ĕнтĕ пиллĕкмĕш хут кăнтăрлах тапанаççĕ.

Мартăн 5-мĕшĕнче пулса иртнĕ операцисем вăхăтĕнче Америка бомбардировщикĕсем тăшманăн 13 истребительне персе ӳкернĕ. Мартăн 5-мĕшĕнче пĕтĕмпе нимĕçсен 37 самолетне персе ӳкернĕ.

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем мартăн 8-мĕшĕнче кăнтăрла Берлинри промышленность объекчĕсене атакăланă. Хула çине 350.000 вут тивертекен бомба тата 10.000 фугаслă бомба пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен бомбардировка тăвакан йывăр авиацийĕ мартăн 9-мĕшĕнче Берлина тапаннă. Бомбардировщиксене американецсен тата акăлчансен истребителĕсен пысăк соединенийĕсем хӳтĕлесе тăнă.

Берлина мартăн 8-мĕшĕнче тапаннă чухне хулари шарикоподшипниксем тăвакан завода вăйлă сиенленĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 83 самолетне персе ӳкернĕ. Союзниксен 54 самолет пĕтнĕ.

Ĕнер ирхине «Мэродер» йышши 150 самолет нимĕçсен Голландири икĕ аэродромне тапаннă. Икĕ аэродрома та пысăк сиен кӳнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: акăлчансен «Москитс» йышши бомбардировщикĕсем мартăн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Хĕвеланăç Германири объектсене тапаннă. Акăлчансен пур самолечĕсем те хăйсен базисене таврăннă.

Мартăн 5-мĕшĕнче кăнтăрла «Либерейтор» йышши самолетсем Германин Коньякри истребительнăй тата бомбардировочнăй авиацин базине атакăланă. Çавăн пекех «Либерейтор» йышши самолетсемех тăшманăн Бержеракри аэродромĕсене тата Кăнтăр-Хĕвеланăç Францири ытти объектсене те атакăланă

Фронтри хĕрсем

. . . Девушка в шинели не по росту, —
Дорогой товарищ боевой!
А. СУРКОВ.

Нумай вĕсем... Вăрçăччен хăшĕ вĕреннĕ, хăшĕ, халь çеç вĕренсе пĕтерсе, кăйсем кăмăлласа суйласа илнĕ ĕçе тытăнма хатĕрленнĕ. Кашниннех хăйĕн ĕмĕчĕ пулнă. Пурин те чĕрисем савăнăçпа тулса, хаваслăн пулнă: умра анлă çул пулнă-çке, çав çул пысăк телей патнелле илсе кайнă!

Анчах сасартăк вăрçă пуçланнă. Çĕршыв умне çав тери пысăк хăрушлăх тухса тăнă.

Совет халăхĕ алла хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç тухнă. Арçынсемпе пĕрле пин-пин хĕрарăмсемпе хĕрсем те çара кайнă, кашниех хамăрăн çĕнтерӳ ĕçĕ валли пĕтĕм вăйне, кирлĕ пулсан — пурнăçне те пама хатĕр пулнă.

I

...Пирĕн часть С. ятлă пысăк шыв урлă каçса унăн леш енче çирĕпленчĕ. Нимĕçсем, мĕнпур вăйне пухса, пирĕн подразделенисене çыранран каялла сиктерсе, шыва путарасшăн пулчĕç. Калама та çук хăрушлă çапăçу пуçланса кайрĕ. Снаряд е мина ӳксе çурăлман пĕр метр çĕр те юлмарĕ ĕнтĕ.

Снарядсемпе минăсем çав тери йышлăн çуса тăнипе, малти линипе командный пункта çыхăнтаракан телефон линийĕ темиçе вунă çĕрте татăлнă. Провод пуртăна вакланă пекех вакланнă, ăна сыпса тӳрлетме те май килмен. Кунта çĕнĕ кабель кирлĕ пулнă, анчах ăл айĕнче вăл пулман. Вара связистсен командирĕ Клава Анилова ятлă çамрăк хĕрача-телефонисткăна çапла хушнă:

— Халех леш айккине кай та, кабель илсе кил!

— Есть! — тенĕ комсомолка.

Снарядсем пасăрхи пекех кашни метрах çурăлнă. Таврара минăсем ӳлени, тата осколоксем шăхăрни çеç илтĕнсе тăнă. Клава нимĕне те пăхман, приказа пурнăçлама чупнă. Леш айккинчи çыранă вăл чиперех çитнĕ, анчах каялла шугрмовой кĕпер тăрăх чупса килнĕ чухне, çырана çитесси пĕр 20 метр пек юлсан, юнашарах снаряд çурăлнă та, ăна ураран икĕ осколок пырса тивнĕ. Алăри кабель шыва ӳкнĕ. Клава çавăнтах кĕпер çинчен сиксе, шыври кабеле тупса кăларнă, унтан вара çырана тухса сурансене çыхнă та, урисем темле ыратнă пулсан та, командирĕ патне çитнĕ.

— Сирĕн приказа пурнăçларăм!

— Матур! — тенĕ командир. — Анчах та, мĕншĕн сирĕн сăнăр улшăннă пек? Тем пулман-и сире?

— Çук, — тенĕ Клава, — мана нимĕн те пулман...

Çур сехетрен связь малалла ĕçлеме тытăннă. Клава хăйĕн вырăнĕнче ларнă. Вăл командный пункта çав вăхăтра хаяррăн çапăçакан подразделенисемпе çыхăнтарнă.

Анчах пирĕн боецсем хĕсех çитерпĕ тăшман урнăçемĕн урнă. Унăн артиллерийĕ тата хытăрах пеме тапратнă. Вăл пирĕн командный пункта аркатасшăн пулнă. Йĕри-тавра тĕтĕм, хăрăм, тусан йăсăрланнă, осколоксем сирпĕннĕ.

Клава çаплах ĕçленĕ... Акă, юнашарах снаряд çурăлса, ăна сывлăшпа сĕкнесе ывăтнă. Клава пурĕпĕр хăй алăринчи трубкăна пăрахман. Самантран тепĕр снаряд çурăлса, ăна тăпра айне тунă. Паттăр хĕр пурĕпĕр ĕçленĕ. Юнашарах снаряд тӳрех Клавăн телефон аппаратне лексе аркатнă, хĕрĕн ӳтне пурпĕр осколок кĕрсе ларнă. Вăл юн юхтарса, командный пункт еннелле шăвăнсе тытăннă. Çул çинче ăна боецсем тĕл пулнă:

— Ăçта каятăн?

— Аппарат çĕмĕрĕлчĕ... Командира пĕлтермелле... — тенĕ те Клава, ăнран кайнă.

...Тыла госпитальне ăсатнă чухне Клава хăйсен командирне çирĕппĕн шантарса хăварнă:

— Сывалсанах каялла, фронта таврăнатăп!

II

Кашни ир, тул çутăлма пуçланă чухне, пирĕн траншейăсенчен красноармеец тумне тăхăннă çамрăк хĕр шуса тухать те, нимĕçсем еннелле 50—100 метр шуса каять. Кунта вăл хăй валли икĕ пĕчĕк окоп алтать, унтан нимĕçсем енче мĕн пулнине тинкерсех сăнама тытăнать...

Акă, пĕр нимĕç траншейăран тухса тыл еннелле темиçе утăм ярса пусать. Çамрăк хĕр çавăнтах ăна оптически прибор витĕр пăхса тĕллет те, винтовкăн спусковой крючокĕ çине пусать. Нимĕç ӳкет. Урăх ĕнтĕ вăл совет çĕрне нихăçан та пылтаймасть.

Нимĕçе персе ӳкерекенни — снайпер Шура Басанкина, комсомолка. Хăйсен снайпер группинчи ытти хĕрсем пекех, Хĕрлĕ Çара хăйĕн ирĕкĕпе килнĕскер, вăл малтан запасной полкра писарь пулса ĕçленĕ, анчах ку ĕç кăмăла килмен ăна. Командирсенчен пĕрмаях хăйне фронта яма ыйтнă. Фронта лексен вара снайпер ĕçне вĕреннĕ те, кашни кун «ухутана» çӳреме тытăннă... Хăш-пĕр кун вăл 2—3-шар фашиста «леш тĕнчене» ăсатнă.

Алтă икĕ нимĕçе вĕлернĕ Шурă.

— Ку сахал-ха, — тет вăл. — Манăн тавăру пучĕ пĕчĕккĕ-ха. Эп ăна пĕрмаях ӳстеретĕп!

Хăюллă хĕре, вăл нимĕç салтакĕсене çав тери ăнăçлăн вĕлерме пултарнăшăн, командованн «За отвагу» медальпе тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

III

Вĕри çапăçу вăхăтĕнче пĕр çамрăк лейтенанта темиçе осколок пырса тивнĕ. Ăна медсанбата илсе пынă.

— Юн питĕ нумай кайнă, — тенĕ тухтăр лейтенанта пăхса. — Çавăн пирки вăйсăрланса çитнĕ вăл. Халех юн парас пулать.

Анчах медсанбатра юн пĕтнĕ иккен. Пĕр грамм та юлман. Хăçан илсе килесси те паллă пулман.

— Апла пулсан — сăлаймастпăр ку çынна, — пăрăнса сывласа илнĕ тухтăр.

Çак сăмахсене илтсенех, медсанбатри сестрасенчен пĕри — комсомолка Рима Федина тухтăр умне пырса тăнă.

— Илĕр ман юна. Çак лейтенантăн пурнăçне çăлма мĕн чухлĕ юн кирлĕ, çавăн чухлĕ илĕр!

Тухтăр килĕшнĕ. Çавăнтах Римăнне 400 грамм юн илсе, вилес патнех çитнĕ лейтенанта ярса панă. Тепĕр сехет-сехет çурăран вара лейтенант куçĕсене уçнă. Хăрушлăх иртсе кайнă...

Ултă хутчен Рима Федина хăйĕн юнне çапăçура аманнă воинсем валли панă. Ултă çынна çăлнă.

Кунсăр пуçне, вăл аманнисене пăхма питĕ ăста.

— Пирĕн Рима çынсене эмелрен ытла ăшă сăмахпа сыватать, — теççĕ ун çинчен. — Ăна юратнă пек никама та юратмаççĕ аманнисем...

Кунĕ-кунĕпех пăлатăран пухмасăр ĕçлет вăл. Пĕрин минтерне тӳрлетет, тепĕрне çавăрăнса выртма пулăшать, виççĕмĕшне килтисем патне çыру çырса парать, унтан пĕр-пĕр кĕнеке тытса вулать те илтĕнмелле вулать.

Аманнисем тылри госпитальсене лексен вара Римăна тав туса вуншар çырусем çыраççĕ.

— Эс çавăн чух маншăн тăван аннерен те хаклă пултăн...

Икĕ хутчен наградăларĕ командовани çак комсомолкăна. Пĕринче — «За боевые заслуги» медальпе, тепринче — Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе.

Тивĕçлĕ наградăсем! Мĕншĕн тесен, аманнă боецсене хăвăртрах строя таврăнасси — çав тери пысăк, кирлĕ ĕç. Рима — çав ĕçĕн мастерĕ.

Леонид АГАКОВ.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, **И. В. Дубов** юлташа Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăвашкоопинсоюза ялан ĕçлеме техник-строитель, ĕçпе ĕçукçи экономисчĕ, бухгалтер-ревизор, экономист-плановик кирлĕ.

Адрес: г. Чебоксары, Красная площадь 7, Чувашкоопинсоюз.

3—1.

Чебторгăн Шупашкарти Хĕрлĕ площадьри 6-мĕш номер магазинне тимĕр тыттарнă лайăх çунасем килнĕ. Çунасене çийĕнчех укçа тӳлеттерсе те, укçана учреждени урлă куçарттарса та сутаççĕ.

Чебторг. 2—1.

РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи промысла коопераци управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне экономистсем, бухгалтерсем, орготдел инструкторĕсем, товароведсем, юрисконсульт, стройматериалпа тăрĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен инженерсем тата шут ĕçне ĕçлесе вĕренес текен учениксем кирлĕ.

Работниксем валли столовăй пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Красная площадь, 7.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00578 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.